**Курни-илтнисем**

**(Асаилӳ)**

**Умсăмах**

Пирĕн атте питĕ ĕçчен çынччĕ. Вăл ĕçре те вăрт-варт, матур, çынсемпе калаçса ларма та пултаратчĕ. Унăн ĕçĕсем, тыр-пул акса тăвассисĕр пуçне, ерçнĕ хушăра вăрманпа суту-илӳ тăвакансем патне кĕрĕшсе юман хăма (клепка), брусок вартасси, чукун çул валли шпалсем чутласси, тюлькăсем татасси тата ыт. те пулнă. Унăн сулăмлă пурттипе çивĕч пăчки каснине иквиçĕ çĕр çул ӳснĕ катмар юмансем нумай тӳчлетсе ӳкнĕ. Паллах, ку йывăр ĕçе вăл пĕччен мар, юлташĕсемпе пĕрле эртеллешсе кайса тăватчĕ. Эртелре ĕçлеме хăй ывăлĕсене те хăварман... Вăрман ĕçĕсем пулман чух атте часчасах килте, пӳртре, мĕн те пулин туса ларатчĕ: е сăран алсасем сыпса саплатчĕ, е кивĕ кăçатăсене тĕплетчĕ. Кун пек ĕçсене тума ун патне ялĕпех илсе пыратчĕç.

Атте пӳртре ĕçлесе ларнă чух ун патне тăтăшах хамăр кӳршĕри ваттисем пухăнса ларатчĕç те халлапа çапатчĕç. Хăш-пĕр чух кӳршĕсем кăна мар, таçти, урăх урамри çынсем те пырса ларни сахал мар пулнă...

Калаçасса темĕн çинчен те калаçатчĕç: çĕр сахалли, çĕр начарри çинчен, тырă пулманни çинчен, çĕн çĕре — Çĕпĕрелле куçса каясси çинчен, куçса кайнисенчен мĕнле хыпар илни çинчен, пурнăç хĕсĕкки, выльăх-чĕрлĕх усрама утă-улăм çитменни çинчен тата ыт. çинчен те халлаплатчĕç.

Пирĕн атте хăй патне пынă çынсемпе калаçма хавасчĕ. Калаçу мĕн çинчен пырасси уйрăммăнах пынă çынни мĕн çинчен калаçма юратнинчен килетчĕ. Хăшĕ-пĕри пурнăçпа çĕр çинчен, тыр-пул тăвасси çинчен калаçма юратать, тепри — пурнăçри тĕшмĕшлĕхсем çинчен, тĕнпе турă тавраш е усал-тĕсел тавраш çынна мĕнле сиен, хур е асап кӳни çинчен пакăлтатать,

хăшĕсем тата хуть те мĕн ҫинчен пулсан та шӳтлĕреххĕн халлапсем каласа пама юрататчĕҫ... Вĕсем калаҫатчĕҫ, эпĕ ăҫта та пулин вĕсен ҫывăхнерех вырнаҫса лараттăм та вĕсен сăмахĕсене итлеттĕм. Хăшин халлапĕ ҫӳҫентерсе ярать, хăшĕн тĕлĕнтерсе, хаваслантарса ярать... Хам 10 — 15 ҫулсенче илтнĕ сăмах-халлапсем ман асăмра хальхи пекех сыхланса усраннă. Чăн та акă халĕ, паян е ĕнер-виҫĕм кун илтнисене эпĕ час-часах манса каятăп, тăтăшах сăмахĕсене астăватăп пулсан та кам каласа панисене манса каятăп. Анчах та ҫак хушăрах ача чухне е яш-ҫамрăк чух илтнисене уҫҫăн астуса пурăнатăп. Ҫавăн пек ĕнтĕ вăл: вĕреннĕ психологсем каланă тăрăх, ача чухне пуҫ мими чăнласах та вараланман таса хут листи пекрех пулмалла, унта хăҫан мĕн ҫырса хуни, мĕнле событие паллă халлап-юмах илтĕнсе йĕр хывса хăварни ĕмĕрлĕхе юлать, асран каймасть; ватăлса пынă май нумай йĕр хывăннипе вараланнă пуҫ мими — ĕнер-виҫĕм кун илтнисене те час-часах сĕвĕртсе асран ярать.

## Ҫут ҫанталăк ҫинчен

Ҫут ҫанталăк тӳпи (кăвак пĕлĕт) сĕм авал ҫĕр ҫумĕнчех пулнă тет. Ăна ҫӳллĕ ту ҫине хăпарсан алăпа тытса пăхма та май пулнă тет. Пĕлĕт ҫинче турă пурăннă. Пĕррехинче пĕр айван ҫын (ача) уй варринче пушанма (сысма) ларнă тет те унăн кучĕ вараланнă, ăна шăлса тасатма ҫыннăн нимĕн те пулман. Ун ҫумĕнче пĕр ҫăкăр сăмси (татăкĕ) кăна пулнă. Ҫак ҫын антранипе вараланнă кутне ҫăкăр сăмсипе шăлса тасатнă. Пĕлĕт ҫинчи Турă ҫакна курнă та питĕ йĕрĕнсе кайнă. «Ха, ҫынсем... мĕн хăтланаҫҫĕ вĕсем?! Хăйсене тăранса пурăнма панă таса япалана вараласҫĕ», — тенĕ тет. «Ҫынсем таса мар иккен, йĕрĕнмелле ҫылăхлă ĕҫсем тăва пуҫларĕҫ. Каплах хăтлансан вĕсем пĕлĕте те варалĕҫ», — тенĕ тет те пĕлĕте ҫĕртен уйрăлма хушнă тет. Вара ҫĕре витсе тăнă кăвак пĕлĕт (ҫанталăк тӳпи) нихҫан та этем ҫитсе тĕкĕнми пулма

çĕкленсе çӳлелле хăпарса кайнă. Çавăнтанпа çанталăк тӳпи çĕр кăкăрĕнчен уйрăлса питĕ çӳлте, инçетре тăракан пулнă.

1904 çулта Чĕкеç (Марье) карчăк каласа панине хам илтнĕ. (Мария Кузьминична — Тумик Куçми Чĕкеçĕ — хам юлташ пулнă Еххим амăшĕ.) Чĕкеç карчăк пирĕн кӳршĕре пурăнатчĕ.

*Асăрхаттарни*: Ку халлапа илтни 50 çул ытла ĕнтĕ. Анчах та эпĕ ăна хальхи пекех астăватăп. «Ача чухнехи (çамрăк чухнехи) çыннăн пуç мимийĕ шурă хут листи пекех таса» теççĕ педагогсем. Çав таса пуç мимине ачалăхра çырăнса юлнисем (мĕн илтни-куриисем йĕр туса хăварни), чăнахах та ĕмĕрлĕхе юлса аван астăвăнаççĕ иккен. Эпĕ хамах акă халĕ 65 çулхи çын, ĕнер-паян илтнисене тăтăшах манса каятăп. Çак хушăрах ача чухнехине, çичĕ-сакăр çулсенчен пуçласа çирĕм çула çитичченхи тапхăрта илтни-тӳснисене аванах астуса пурăнатăп. Шкулта вĕреннĕ чух вуланă (Суриков, Некрасов, Кольцов, Никитин, Пушкин, Лермонтов) сăввисене чылайăшне такăнмасăр каласа пама пултаратăп...

Кăна эпĕ хăш-пĕрисем аллă çул ĕлĕк илтнисене халĕ йăнăштарма е пăтраштарса яма пултарнă тесе айăпласран çыратăп. Мĕншĕн тесен манăн кунта çырса хунисенчен нумайăшĕ хам 10 — 15 çулта чух илтнĕскерсем пулаççĕ. Каярахпа — çитĕнсе çитсен илтнĕ халлап-юмахсем.

**Малтанхи чĕрчунсем**

Сĕм авалхи чĕрĕ чунсем, çавăн пекех çынсем те, питĕ шултра та вăйлă пулнă тет. Çыннисем нумай çул пурăннă тет. Мĕншĕн тесен ун чухне çĕр

кăкăрĕ сĕткенлĕ пулнă, вăл хăй çинче пурăнакан чĕрĕ чунсене лайăх тăрантарма пултарнă. Пурăна-киле çĕр кăкăрĕ ырханланса пынă, унăн сĕткенĕ те пĕтсе, типсе çитнĕ. Çавăн пирки чĕрĕ чунсем те начарланса, вĕтелсе пынă. Çынсем те вĕтелсе çитнĕ тет. Темиçе ĕмĕр тăршшĕнче çак çĕр кăкăрĕ пĕтĕмпех типсе çитмелле, унăн сĕткенĕ те йăлтах типсе лармалла тет. Ун чух вара мĕн пур чĕрĕ чунсем те юлмаççĕ тет.

* * *

Ку халлапа пĕр çынтан çеç мар, темиçе çынтан та илтнĕ. Ячĕсене пурне те астума пултараймастăп. Пĕр Якур Йăванĕ текен çын каланине кăна çирĕплетсе пама пултаратăп. Вăл пирĕн кӳрĕш çынниехчĕ: турра хыта ĕненекен, православи тĕнне иленсе çитнĕ çынччĕ. Якур Йăванĕ 55 çул енне çывхарсан 1912 — 1913-мĕш çулсенче чахоткăпа вилчĕ.

Якур Йăванĕ нумай халлап, пуринчен ытла Çĕпĕр енчи «ырлăхсем» çинчен тата тĕнпеле çыхăннă халлапсем çинчен каласа пама юрататчĕ. Унăн сăнарне эпĕ «Шурăмпуç килсен» романра Инес Якурĕ ячĕпе кăтартса панă.

**Улăп çинчен**

Улăп çинчен калани чăвашсен сĕм авалтан юлнă былинăллă юмах татăк-кĕсĕкĕсем. Авал вăл тĕлĕнмелле пысăк, вăрăм юмах пулнă пулмалла. Сăмахĕсем тăрăх, ăна чăваш халăхĕ авал хăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, вырăнтан вырăна куçкаласа çӳренĕ тапхăрта, çĕр ĕçĕ çине куçас умĕн хывни курăнать. Тахçан сĕм авал хывса хăварнă юмах пурăна киле халăхăн пурнăç йĕркисем улшăннă май ытти юмахсем пекех чылай улшăнса та пынă пулмалла. Анчах çапах та унăн тĕп шăнăрĕ — Улăппа унăн амăшĕ хушшинчи калаçусем çинчен калани — улшăнман пулас. Былинăсенче вăйлă паттăрсем

(пăхаттирсем) халăхшăн тăрăшни, халăхшăн ĕçлени курăнать. Чăвашсен «Улăп» юмахĕнче «Улăп-паттăр халăхшăн, вăйсăр çынсемшĕн ĕçлени курăнмасть, вăл пĕр хăйшĕн кăна тăрăшни палăрать. Ун пирки çапла шухăшлама пулать: Улăп хăй амăшĕпе кăна мар, ун таврашĕнче тăванĕсем те тата ытти вăйсăр çынсем те (халăхсем те) пулнă пулĕ, тен, вăл вĕсемшĕн те тăрăшнă пулĕ тен. Анчах та вĕсем çинчен калани нумай ĕмĕрсем тăршшĕнче манăçа юлма пултарнă. Авалхи ĕмĕрсенче пирĕн халăхăн çырса хăварма çырулăхĕ пулман, халăх хушшинчи юмах-халлапсене вăл сыпăкран сыпăка чĕлхе вĕççĕн, сăмахпа çеç каласа хăварнă. Ун пек чух, паллах, çырман юмах-халлап ĕмĕрсем тăршшĕнче нумай улшăнса пыма пултарать. Хусан университетĕнче вĕрентсе пурăннă Катанов профессор каланă тăрăх, чăвашсен Улăпĕ çинчен калакан юмах пек юмах-халлапсем тĕрĕк йăхĕнчен тухнă халăхсен нумайăшĕн пулнă. (Вăл çырнине «Известия Каз. О-ва Археологии и этнографии» журналăн ХШ-мĕш томĕнчи 1-мĕш кăларăмĕнче вулама пулать.) Катанов вăл хăй те казах (кăркăс) çынни пулнă, çавăнпа та тĕрĕк халăхĕсемпе хытă интересленнĕ, вĕсен фольклорĕсене тĕпчесе вĕреннĕ т. ыт. те. Катанов çырнă тăрăх, Улăп паттăр çинчен калакан юмах евĕрлĕ халлап-юмахсем — казах, кăркăс, узбек халăхĕсен т. ыт. те пур. Хăш халăхсен вăл — «Алăп(Алып)», хăшĕсен «Алиф», хăшĕсен «Аджа» ятпа çӳрет. Эпĕ Катанов çырса кăтартнă кăркăссен «Аджи» çинчен вуласа тухрăм. Пурнăç йăлисемпе йĕркисем тăрăх шайласан Аджа чăвашсен Улăпĕнчен те авалрах пурăнни курăнать.

Улăп çинчен каланисене пĕр 50 — 60 çул ĕлĕкрех çеç, эпĕ ача чухне кăна час-часах илтме пулатчĕ. Мĕншĕн тесен ун чух çырăва пĕлмен ваттисем авалтан, хăйсен аслашшĕ-асламăшĕсенчен юлнă традицисем тăрăх, юмах-халлапсене каласа пама юрататчĕç. Хальхи вăхăтра акă, халăх хушшине çырулăх çирĕп тымар янă хыççăн, пирĕн ăста юмахçăсем сахалланчĕç е пĕтсе çитрĕç тесен те юрать.

Ёлĕкхи вăхăтра та Улăп ҫинчен каланисем татăкăн-кĕсĕкĕн ҫеҫ тăрса юлнăччĕ. Хальхи вăхăтра ун пек татăк-кĕсĕксене калакансем те сахал. Ку ĕнтĕ пирĕн ҫамрăк сыпăкри ăру пуринчен ытла ҫырулăх ҫине, пичетленсе тухакан кĕнекесем ҫине тайăннинчен тата нумайăшĕ наукăпа техника ӳсĕмĕсемпе интересленнипе фольклор ҫине пăхманнинчен те килет пулмалла.

Пирĕн XX ĕмĕре Улăп ҫинчен калакан юмахран ҫаксем кăна тăрса юлнăччĕ: Улăн вăрмансем, шывсем урлă утни, вăл ҫӳллĕ хырсемпе чăрăшсене пĕҫ хушши витĕр хăварни, ватă йывăҫсене «ĕрĕм (армути)» тесе аллипе тăпăлтарса ывăтни: хирте суха тăвакан ҫынсене курсан вĕсене «ҫереме чавакан кăвакарчăнсем е ҫĕр хурчĕсем» тесе кĕсйине чиксе хăй амăшĕ патне илсе кайни, амăшĕ ăна ҫав ҫынсене тивме хушманни, «яр вĕсене каялла... эпир вилсен ҫĕр ҫинче ҫакăн пек вĕтĕ ҫынсем ҫуралса ĕрчĕҫ, вĕсем ҫĕре сухаласа тырă туса пурăнĕҫ» тени; тата уй-хирти кургансене халăх хушшинче «Улăп тăпри», ҫаврака лупашкасене «Улăп ури йĕрри» тесе каланисем кăна Улăп ҫинчен аса илтеретчĕҫ. «Улăп ҫăпатине салтса силленĕ» тет те, тăпра куписем пулса юлнă тет тетчĕҫ... Паллах, Улăп ҫинчен ытларах каласа пама пултаракансем те пулнах ĕнтĕ. Анчах та хăй вăхăтĕнче вĕсем каланисене никам та ҫырса хăварма шутламан. Кашни ватă ҫынах вилсен хăйне пĕрле нумай фольклор япалисене, хăй пĕлни-илтнисене илсе каять. Ҫавăнпа та сывă чухне вĕсем курни-илтнисене, чи кирлисене, фольклоршăн пахисене ҫырса илме тăрăшмалла.

Улăп ҫинчен пирĕн Ҫуйăн Хĕветĕрĕ (Семен Федоровчĕ пулас) пухса ҫырнисем питĕ паха шутланаҫҫĕ. Ҫуйăн пуринчен ытла хăйĕн асламăшĕ тата хăйсен ялĕнчи пĕр-икĕ ҫын каласа панисене астуса илсе ҫырнă. Хăй ҫамрăк чух, манăн «Улăпсем» поэмăна курса вуличчен, Ҫуйăн Улăп ҫинчен хăй мĕн илтнисене хаклама та пĕлмен. Кайран, тавҫăрса илсен, ҫырма тăрать — анчах асламăшĕ вилнĕ пулнă тата ялĕнче пулнă юмахҫăсем те ҫĕн ҫĕре куҫса кайнă иккен. Юмахҫисене шыраса та вăл вĕсем хыҫҫăн ҫĕн ҫĕре те кайса килчĕ, анчах вĕсене тупаймарĕ пулас.

Çуйăп Улăп çинчен çырнисем питĕ паха та хаклă. Анчах та вăл çырнисенчен чăн-чăн авалтан юлнă юмахĕпе ун çумне хăй çыпăçтарса çырнисене çеç уйăрса илме пĕлмелле. Çуйăнăн ку юмаха хăй мĕнле илтнĕ пек çеç — прозăна кăна çырмалла пулнă. Сăвăласа çырнипе вăл сăвă йĕркисене рифмăлас тата ритмлас пирки юмахăн чăн тĕшшисене нумай çĕрте урăхлатма пултарнă (ăна вăл хăй те тунмасть!).

Кирек мĕнле пулсан та, Çуйăн пухса çырнă материал тăрăх Улăппа унăн амăшĕн тата ытти паттăрсен пурнăçĕсем те туллинрех те юмахла-фантазилле курăнаççĕ. Çуйăн «Улăпне» пичетлесе кăлармаллах.

Улăн пек паттăрсем, былинăллă пăхаттирсем çинчен каланисем пирĕн урăх юмахсем те пулнă: вĕсенчен чи палли «Хĕвеле ирĕке кăларни» Михаил Петрович Петров (Тинехпи) çырса хăварни. Анчах Тинехпи ку хăй ача чухне илтнĕ юмаха чылай манса кайни çинчен хăех каласа парать. Вăл халĕ те питĕ пысăк фантазиллĕ, вăйлă та илемлĕ юмах.

Тата фольклора юрататакан Илле Тукташ та час-часах ĕлĕк, хăй ача чух, илтнĕ пĕр юмах çинчен асăнатчĕ. Ку юмахĕ пĕр вăйлă паттăр Пăта-патшан пăта пек тăрăнакан çар çыннисемпе çапăçса вĕсене çĕмĕрни çинчен, çак паттăр хăйĕн тăван халăхне усал тăшмансенчен хăтарса ирĕклĕ кун-çул пани çинчен калатчĕ. Анчах та, манса кайнă пирки, Тукташ ку юмаха çырса хăварма пултараймарĕ. «Ку юмах вара чăн та чăваш халăхĕн былиниех», — тетчĕ вăл ăна çырайманшăн шеллесе.

Çапла, Улăп чăвашсен сĕм авалтан килекен юмахĕ, вăл ĕмĕртен ĕмĕре чĕлхе вĕççĕн пырса халăх хушшинче таткаланса кăна юлнă.

*1961, мартăн 23-мĕшĕ.*